# Сăхман айĕнчи ача амăшĕ

(калав)

## I

Çемçе сăпка çинче çывăрса кайнă ача пек лăпкă, çилсĕр каç. Таçал ялĕ çывăрать, пӳртсем умĕнчи ватă йăмрасем пуçĕсене çĕрелле уснă. Йытăсем вĕрмеççĕ. Вĕсем пурте сарайсенчи улăмран тунă йăвисене кĕрсе выртнă. Пĕлĕт шур утиллĕ улăх пек — ниçта та хура тĕм çук. Уйăх халь анчах çуралнă тиха майлă, аран-аран шăвать.

Таçал ялĕ сăртсем çинчи ăшă ыйхăпа çывăрать. Ялăн сылтăм енче çырма тăсăлса выртать. Çырма урлă кăçал пĕве тунă. Пĕве шывĕ уйăх çути ун çине ӳкнĕрен сарă çутă-хĕрлĕн курăнать. Пĕве пуçĕнче вĕлтрен шăтса тухнă. Вĕсем те енчен еннелле сулăнаççĕ, темĕскер итленĕ пек калама çук шăп лараççĕ. Мĕн итлемелли вара? Çутă уйăхсăр пуçне пурте çывăраççĕ пулсан кам калаçнине итлемелле?.. Çук, пурте çывăрмаççĕ. Пĕр вăхăтра пурин те ыйхă килме пултараймасть.

— Эх, Санюк, халĕ те ĕненместĕн-и вара эс мана?.. Халĕ те сан умăнта шанчăксăр çын-ши вара эпĕ? Çук, сан çывăхăнтан эп нихçан та пăрăнас çук. Эп сансăр пĕр кун та пурăнма пултараймастăп. Сансăр ман пурнăç килĕшӳллĕ пулас çук... Тен, эс ху мана юратмастăн пулĕ?..

— Тĕлĕнетĕп санран, Петĕр, сана савмастăп пулсан, шухăшла-ха, мĕн-ма ларас кунта? Аттесем халĕ те ятлаççĕ, ирхине тин килен киле, кампа çӳретĕн çав таранччен тесе яланах калаçаççĕ... Çук, Петĕр, çак таранччен эп никампа та ларас çук... Маншăн пулсан эсĕ темрен те хаклă. Анчах çапах та хĕр пуçпах... ун пек юрамĕ. Кам пĕлет? Эс халь манпа лайăх калаçатăн, юрататăн... Тен, урăхла та пулĕ? Юрататăнах пулсан, сан ун пек шухăшсем пулмалла мар...

Çапла ĕнтĕ, Таçал ялĕ пĕтĕмĕшпех çывăрмасть. Ун кăçал пĕвеленĕ пĕви çинче никам та çук мар. Унта Санюкпа Петĕр пур. Вĕсем пĕве пуçĕнче пĕве шывĕ çинелле пăхса лараççĕ.

Санюк — Ваçли хĕрĕ. Ваçли тĕреклĕ, чипер çын. Ăна каччă чухне Чипер Ваçли тесе чĕннĕ, Санюк ашшĕне хунă.

Куçĕсем ашшĕнни пекех пысăк. Вăл куççем такама та тапратмалла. Вăл куççене курса Таçал каччисем сахал тĕлĕнмен. Вăл куççене курсан Санюк çамки айĕнче икĕ кăвакарчăн йăва çавăрса пурăнаççĕ темелле... Çак куççемшĕн Таçал каччисем сахал çапăçман. Çапăçса пуçĕсене çуракансем те пулнă.

Санюкпа ăшăнса пĕве çинче ларакан Петĕр те Санюк арки çине лариччен сахал хĕнлĕх тӳсмен. Ăна виç эрне ĕлĕкрех çеç виç ача аслă урамра хирĕç пулса хĕнеме тăнă. Вăл аран çеç тарса ĕлкĕрнĕ. Хĕнеме шухăшланă каччăсенчен вĕçерĕнме çăмăлах пулман. Петĕр хăй вăйсăр пулнă пулсан айăккисене шутлаттармаллах пулĕччĕ, анчах вăл та çирĕп.

Ун ашшĕ ĕлĕкрех, вăрман сыхланă чухне, вăрман вăрлама пынă виç тутара пĕчченех çыхса яла илсе пынă. Унтан халĕ те хăраççĕ. Хĕрĕх пиллĕкре пулсан та тутарсен сапан туйне каймасăр юлмасть вăл. Унта вăл кашни çулах паттăра тухса килет. Ывăлĕ — Петĕр, ашшĕ пекех пулмасан та, вăйсăр каччă мар. Çавна кура унтан та нумайăшĕ шикленерех çӳреççĕ. Юлашки вăхăтра Петĕр Санюкпа çӳренине юратмасăр пурăннă каччăсем те Петĕр çине тăрăнма пăрахрĕç ĕнтĕ. Хăйсен шăписемпе килĕшрĕç. Килĕшмесĕр тăма та май çук. Санюк Петĕрех юрататъ.

— Ах, Петĕр, мĕн курас вара манăн? Ял çыннисем пĕлсен мĕн калĕç? Илсе каяс тесен паянах илсе кай, эп сан патна пыратăп. Сансăр эп хам та пурăнаймастăп. Анчах халь...

Шурӑмпуҫ ҫуталса килет. Пӗлӗт ҫинче таҫтан килсе тухнӑ хура тӗмсем ҫӳреҫҫӗ. Уйӑхӗ сӑртсем хыҫне шӑппӑн, темрен вӑтаннӑ пек пулса кайса вырнаҫрӗ. Ҫырма хӗрринчи ҫӗнӗ хапха Санюк кӗнӗрен сас пачӗ.

## II

Михаил Архангел кунӗ Санюк ашшӗсем Кавала чиркӳ праҫникне кайнӑ. Кавал вӑл чухӑн ял мар. Унти хресченсем праҫник таврашне чапсӑр туса ирттермеҫҫӗ. Ӗҫкӗ ӗҫес пулсан, мӗн хӗвел анса шурӑм пуҫ шуралса тухичченех ӗҫеҫҫӗ. Ҫавӑн пирки Санюк амӑшӗ — Клавье инке, юратнӑ Санюкне: «Ырансӑр килместпӗр эпир, хӗрӗм, чипер пуҫтарӑнса лар, асту, хуран айӗнче кӑвар пурччӗ, ҫӗре ӳксе амаланса ан кайтӑр, тӗпӗртетсе ан лар», — тесе хӑварнӑ...

Ҫук, Санюк тӗпӗртетсе ларас ҫук. Ун пек йӑла ун нихҫан та пулман. Уншӑн пулсан Петӗрсӗр пуҫне никам та ан килтӗр, никам та ан пултӑр.

— Эх, Петӗр, Петӗр... ӑҫта эс? Мӗн-ма килместӗн?.. Е кирлӗ мар пултӑм-им халь?!.

Пӳртре Санюксӑр пуҫне никам та ҫук. Вӑл пӗчченех. Халӗ ӗнтӗ тӑхӑр сехет те ҫитрӗ. Анчах Петӗр ҫаплах килмест...

Санюк амӑшӗсем Кавала кайнине Петӗр пӗлет те ӗнтӗ... Санюк Петӗр килмесрен пӑшӑрханма тытӑнчӗ... Мӗн-ма пӑшӑрханас мар? Санюкӑн ӑш-чиккинче хӗр пуҫпах ача ҫитӗнет. Вӑл виҫ уйӑхра ӗнтӗ. Ун ашшӗ — Петӗр.

Ак тӗпелте сехет вуннӑ та ҫапрӗ. Тепрер сехет тӑрсан ҫывӑрма та вӑхӑт. Кӗркунне никамах та нумай лармасть...

Сĕтел ҫинче ларакан лампа краҫҫын пĕтсе килнĕрен хăйĕн хĕрлĕ чĕлхине кĕскетме пуҫларĕ. Пӳрт тĕттĕмленет. Ăҫта килчĕ унта пытаннă таракансем пӳрт пĕренисем ҫине тухрĕҫ, таҫта васкаҫҫĕ... Санюк, сĕтел ҫине пуҫтарса кĕнчеле авăрлама пуҫланăскер, хале ĕнтĕ ăна та пăрахрĕ... Ун ҫумĕнче мăрлатса ларакан кушак та кăмака ҫине улăхса кайрĕ. Пӳртре шăп. Сайра хутра ҫеҫ ассăн сывласа яни илтĕнет. Тата хăш-пĕр вăхăтра кăмака айĕнче шăшисем ашкăнни илтĕнет.

«Эх, Петĕр, Петĕр, ăҫта эс? Е кирлĕ мар пултăм-им халь?..»

Кайăк пуҫĕ пек лапка-лапка юр ҫăвать. Кăнтăрла кăна кăваккăн курăннă урам ҫĕнĕ тумтир тăхăнать. Ҫил вăйлă мар. Ҫанталăк ăшă.

...Мишук мунчи — ҫырмара, Мишук хăй мунчине кăҫал анчах сиплеттернĕ. Ун мунчи ĕлĕк хура мунча пулнă, халĕ ĕнтĕ Мишук эрех сутса пуйса кайнă пирки мунчине пӳрт пекех пысăк туса лартрĕ, ҫине те хăма витрĕ. Кун пек мунча Таҫал каччисемпе хĕрĕсем сахал кураҫҫĕ. Пĕлтĕр ҫеҫ ку кас хĕрĕсем ҫĕр мунчара улах ларнă. Халĕ ĕнтĕ ун пек мар, сарлака саксемпе ҫавăрнă мунчара лараҫҫĕ.

— Эх, спаҫҫип Мишук пиччене пире ҫавăн пек мунча туса панăшăн, кунта калама ҫук лайăх ларма, — теҫҫĕ хĕрсем. Чăнах та лайăх ĕнтĕ. Тăвăр мар, килнĕ каччăсем те ура ҫинче тăмаҫҫĕ, пурин валли те вырăн пур. Анчах ҫапла пулсан та хăшĕ-пĕрисем сак ҫинче мар, хĕрсен аркисем ҫинче лараҫҫĕ. Вĕсемшĕн пулсан хĕр арки ҫине лармасан улаха та тухмалла мар. Ҫапла ĕнтĕ, кĕркунне тивлечĕпе Таҫал яшĕсем улах ларма пуҫланă. Ҫамрăк савăнать, ăна тытса чарма май ҫук, вĕсен вăй-халĕ сăртран юхса анакан шыв пекех хастар. Вĕсемшĕн пулсан вăйă-кулă пултăр. Вĕсене хуйăх кирлĕ мар.

— Петĕр, мĕн пуҫна усса ларан ҫав эсĕ? Е Санюк килте ҫук-и-мĕн?

— Çук-çке... Эх, эсир те çав, хĕрсем, чĕпĕтесшĕн çеç ларатăр... Апла пулсан ман никампа та калаçма юрамасть-и-ха? Е Санюкпа çӳренĕ тесе сирĕн пата та килме тивĕçлĕ мар-и?..

Çапла ĕнтĕ Петĕр Мишук мунчинче ларать. Уншăн пулсан Санюк ăна кĕтни хаклах мар иккен. Санюкпа пурăнни çитет тет вăл. Халĕ ĕнтĕ урăххипе савăнсан та юрамалла...

«Эх, Петĕр, Петĕр... Ăçта эс? Е кирлĕ мар пултăм-и халь?..» — татăлсах хуйхăрать Санюк çак вăхăтра.

### III

Шартлама сивĕ каç. Пĕве патĕнчи йăмрасем сивĕ витнĕрен пĕрин хыççăн тепри çурăлаççĕ. Карта витĕр çил шăхăрать. Çил çĕрти юра çĕклесе пĕвен сулахай енчи сăртне купалать. Çил ахаль те тĕттĕм çĕре татах тĕттĕмлетет...

Таçал урамĕнче хунар çутса шырасан та кушака та тĕл пулмăн. Таçал ялĕнчи чĕрчунсем пурте ăшă шăтăксенче. Сарай çунаттисем ăшне йăва çавăрнă çерçисем те таçта амаках, шалах кĕрсе выртнă, пĕр сас-чĕв те памаççĕ... Çанталăк улать, шăхăрать, тусать. Анчах, апла пулсан та, Ваçли хĕрĕ Санюк пĕве çинчи тирĕ-çӳсем шăтарнă шăтăк умĕнче тăрать. Вăл çĕтĕк сăхман тăхăннă, сăхманпах ачине чĕркенĕ. Ăна сивĕ мар. Вăл чĕтремест. Уншăн пулсан халь сивĕ çанталăк, урнă çил вăй-хăвачĕ нимĕн те мар. Уншăн пулсан этем пурнăçĕ, пĕр чĕр чун пурнăçĕ çĕр çинчи çӳп пек хисепсĕр япала.

— Ула, урнă çил... Ула, эс мана хăратаймăн. Эпĕ халь нимĕнрен те хăрамастăп. Маншăн пулсан эс шăхăрни, çĕр çинче выртакан юра çӳле улăхтарса тусни — нимĕн те мар... Çук, санран хăрамастăп. Санран пурнас

текенсем çеç хăраççĕ... Ак ман алăра хам çуратнă ача, ăна пурнăçа юратакансене пиллесе хăварас çук эпĕ. Вăл хамăн, ăна хам çуратнă, хампа пĕрлех сӳнтеретĕп... Эп çамрăк, эп ĕнер анчах вун тăххăр тултартăм, этем çĕр çинче мĕншĕн пурăннине лайăх пĕлетĕп. Çапла, Таçал ялĕ, сыв пул... Савнă Петĕр... Сыв пул! Ах, ачам... анчах уçăлнă куçусене халех хупас-ши?.. Ах, мĕн курас манăн... Халех пĕтес-ши вара?..

Ах, Петĕр, Петĕр... ăçта эс?..

## IV

Çу иртсен çурçĕр енчен сив çил вĕрнипе вăрманти чечексем пуçĕсене усаççĕ, хуçăлса анма тытăнаççĕ. Анчах хăш-пĕр чухне кĕркунне çитсен те ăшă хĕвел ăшăтса вĕсене каллех ура çине тăрататъ, вĕсем пĕр вăхăтлăха каллех савăнаççĕ. Çавăн пекех Санюк та пĕвери шăтăка сиксе вилес тенĕ çĕртенех урăх шухăш тытса çăлăнса юлчĕ. Çук, вăл хăйне хĕрхенмен, уншăн пулсан вăл хăй нимĕн те мар. Ăна хăй çуратнă ача çăлнă. Анчах сывлама пуçланă чĕр чуна халех шăтăка илсе кĕме вăл пултарайман... Çапла ĕнтĕ Санюк хăй ачишĕн пурăнма шутланă. Ак халĕ вăл пӳртре. Пӳрт маччинчен сăпка çакса янă. Сăпкинче — ачи. Халĕ ĕнтĕ мĕн кĕркуннерен пуçласа Санюка тем те пĕр каласа ятланă ашшĕпе амăшĕ те вăрçмаççĕ. Вĕсем хăйсен хĕрĕ пĕвери шăтăка сиксе вилме тăнине лайăхах пĕлеççĕ. «Уншăн хамăра та айăплĕç, вăл вилнĕ пулсан хамăрах айăплă пулаттăмăр турă умĕнче те», — теççĕ. Анчах Санюк ашшĕсене айăпламан. Санюкшăн ашшĕпе амăшĕ айăпсăр. Вăл ашшĕпе амăшĕ ятламан пулсан та вилес шухăша тытатчех... Вăл çамрăк пулнă, çынсене ĕненнĕ. Пурнăçăн хура кĕсенлĕ тӳнтерлĕхне курман, астивмен. Этем пурнăçĕ уншăн илемлĕ шур чечек пек ӳснĕ. Ăна вăл юратнă, савнă. Кайран вара, Петĕрпе юлташлансан, пурнăçра суя ĕмĕтсем çӳренине сиснĕ. Пурнăçăн шур чечекĕ, савнăçлă чечекĕ, этем йăхĕпех таптанса пынине вăл хăй куçĕпе

курнă... Анчах хăйĕн сăхманĕ айĕнчи кĕсенленмен çăл шывĕ пек таса, халь анчах сывлама пуçланă чун çăлать ăна. Ун чĕри таппинче вăл çĕнĕ ĕмĕт курать... Ах, ачи вăранчĕ, ак вăл ăна сиктерет.

— Çывăр, хĕрĕм, çывăр... ӳссен çывăрма памĕç... Ах, хăçан ăнланакан пулăн-ши эс? Ах, хăçан пĕрре кулăн-ши?

Çук, ачи çывăрса тăраннă. Вăл хăйĕн пĕчĕк аллисене çӳлелле çĕклет. Санюк çакна курсан ачине хытă чуптăвать те арки çине илет.

— Асту, ӳссен никама та ан ĕнен...

*Рзай, В. Сăхман айĕнчи ача амăшĕ : [калав] // Рзай, В. Çырнисен пуххи / В. Рзай. – Шупашкар, 2004. – С. 181-185.*